25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942 МАРТ 6 ЭРНЕКУН 55 (6080) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Фронт валли резервсем ыйăнма пĕлмесĕр хатĕрлесе пымалла

Владимир Ильич Ленин пире çапла вĕрентнĕ: «Чăн-чăн вăрçа туса пыма çарсене хатĕрлес тесен, чухмай вăтăт хушши, çине тăрса, тимлĕн тата дисциплинăллă пулса мăссăллăн ĕçлесе пымалла», тенĕ.

Фашистла империализмлă Германи хирĕç совет халăхĕ туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă халиччен пулнă вăрçăсенчен чи пысăкки, чи йывăрри тата чи аркапуллă пулса тăрать. Пирĕн халăхăн отечественнăй вăрçи хăйĕн стратегиллĕ анлăшĕ енĕпе, вăрçа хутшăннă çынсен хисепĕ енĕпе, вăрçă хирне кăларса янă техника хисепĕ енĕпе историре халиччен пулман пысăк вăрçă пулса тăрать.

Вăçĕ уйăха яхăн ĕнтĕ нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем, Хĕрлĕ Çар хăватлăн пыра-пыра çапнине пула, Хĕвеланăç енчелле чакса пыраççĕ, чĕрĕ вăй енĕпе те, тата техника енĕпе те питех те пысăк çухатусем тăваççĕ. Пуçарулăх халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар аллине куçрĕ. «...Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапса тискер тăшмансене Ленинград патĕнчен хăваласа ярас, Белоруссипе Украинăн, Литвăпа Латвин, Эстонипе Карелин хулисемпе ялĕсене тăшманран тасатас, Совет Крымне ирĕке кăларас, пĕтĕм совет çĕршывĕ çинче хĕрлĕ ялавсем каллех çĕнтерӳллĕн ялкăшма тытăнас вăхăт инçе мар ĕнтĕ». (Сталин).

Куншăн пĕрлех Сталин юлташ совет халăхне çакăн çинчен те асăрхаттарать: тăшман халĕ вăйлă-ха, вăл поражениесем тӳсет пулин те, ăна халĕ аркатса тăкман-ха, унтан та ытларах, ăна пĕтерсе тăкман-ха. Пĕтерсе тăкман пулсан, тăшман хăрушă пулма пăрахмасть. Анăçусем тăвас тесе тата таткăланах çĕмĕрсе тăкассипчен хăтăлса юлас тесе, тăшман хăйĕн пĕтĕм вăйĕсене пухма тăрăшĕ. Çавăнпа та, Сталин юлташ Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне кăларнă приказра кăтартса панă пек: **«пирĕн çĕршывра фронта пулăшма резервсем хатĕрлессине пĕр минутăлăха та вăйсăрлатмалла мар. Урса кайнă тăшмана çĕнтермешкĕн çĕнĕрен те çĕнĕ çар чаçĕсене фронта ярса тăрас пулать».**

Фронт валли вăрçă ĕçне пĕлекен çынсем парса тăракан малтă вучахсенчен пĕри вăл — ĕçсыннисене пурне те çар ĕçне вĕрентни пулса тăрать. ССР Союзĕнчи хĕçпăшал тытма пултаракан, 16 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ арçынсене пурне те çар ĕçне вĕрентме тытăннăранпа 5 уйăх иртрĕ. Халĕ пĕрремĕш черетпе пухнă çынсем çар ĕçне вĕренсе пĕтереççĕ. Малта пыракан облаçсем ĕççыннисене иккĕмĕш черетпе пухса çар ĕçне вĕрентме тытăнчĕç. Всевобутăн çĕршер пин боецĕсем, алла хĕçпăшал илсе, Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсен ретне тăчĕç, халĕ вĕсем нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç геройла çапăçаççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ ĕнтĕ хăйсем тĕл перекен стрелоксемпе пулеметчиксем пулнине, танксене хăюллăн пĕтерсе пыракансем тата паттăр миномётчиксем, пĕр шиксĕр автоматчиксем тата разведчиксем пулнине кăтартса парса мухтава тухрĕç.

Анчах та эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларнă пулсан, пысăк йăнăш тунă пулăттăмăр. Чăн та, организациллĕ пысăк ĕç туса ирттернĕ: çар ĕçне вĕрентекен нумай йышлă пунктсем туса хунă, командирсемпе инструкторсен кадрĕсен составне, тĕпрен илсен, пухса йĕркеленĕ, вĕренме кирлĕ материальнăй базăна хатĕрлесе çитернĕ. Анчах та парти, профсоюз тата комсомол организацисем, военкоматсем, Осоавиахим тата всевобуч работникĕсем чылайĕшĕ çар ĕçне вĕрентессине вăйлатма тата вĕренӳ пахалăхне хăпартма кирлисене пурне те туса çитереймен-ха.

Всевобуч — çав тери пысăк мероприяти пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар валли пополнени массăллăн хатĕрлес тесе тата резервсене çар ĕçне вĕрентессине хальхи вăрçă ыйтнă çӳллĕше çěклес тесе, парти организацисен пурин те всевобуча çине тăрса, куллен ертсе пымалла. Çак питех те ответлă тата питех те кирлĕ ĕçре партипе общественнăй организацисен тăтăшах тата тӳрех хăйсен ĕçлемелле, мĕншĕн тесен фашистла захватчиксене хирĕç эпир туса пыракан йывăр та нумай вăхăта тăсăлакан кĕрешӳре резервсем хатĕрлени ĕçĕн ăнăçлăхне татса парать.

Парти организацисен руководителĕсем чылайĕшĕ пухусем пухнипех е вăрăм резолюцисем йышăннипех лăпланнă. Çапла вара хăйсен задачине пурнăçа кĕртнĕ тесе шутланă. Вĕсем вĕренӳ пункчĕсен ĕçне тĕрĕслесе тăман, вĕренӳ пахалăхĕпе те, вĕренекенсен дисциплинипе те интересленмен. Çавăн пирки начар результатсем патне илсе пынă. Хăшпĕр ыйăнсенче вĕренӳ ĕçне çителĕксĕр туса пыраççĕ, чылай пунктсенче халĕ те вĕренӳ пособийĕсемпе вĕренмелли хĕçпăшалсем çук, Осоавиахим организацийĕсем всевобуча ĕçне пур çĕрте те мар çителĕклĕ пулăшса пынă. Çар ĕçне вĕрентесси вăтам шкулсемпе ытти вĕренӳ заведенийĕсенче те çителĕксĕр пулса пырать-ха.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ всевобуча питех те пысăк вырăна хурса хаклать. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле кăларнă лозунгсенче çапла каланă: «ССР Союзĕнчи гражданинсемпе гражданкăсене пурне те çар ĕçне вĕрентни пирĕн çĕршыв оборонине тĕреклетет. Совет патриочĕсемпе патриоткисем! Вăрçă ĕçне вĕренĕр! Тăван çĕршыва пулăшуллăн хӳтĕлекенсем пулма хатĕрленĕр!»

Пирĕн парти чĕнсе каланине Совет Союзĕн пур кĕтессисенче те пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илеççĕ. Анчах та кашни гражданин тата гражданка çар ĕçне вĕренсе алла илес тесе татах та вăйлăрах тăрăшма тивĕçлĕ.

Нимĕçсен фашистла тискер хайăкĕсем ачасене те, ватă çынсене те хĕрхенмеççĕ. Вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче вĕсем совет хĕрарăмĕсенчен ирсĕррĕн мăшкăллаççĕ. Пирĕн патриоткăсен геройлăхĕ вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк. Вĕсем, арçынсемпе пĕрлех, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç, вилĕмрен хăрамасăр, геройла кĕрешеççĕ. Таньăн — Зоя Космодемьянскаян тата Лиза Чайкинăн геройла образĕсем совет халăхне татах та хаярăрах кĕрешӳве çĕклеççĕ, вĕсем совет хĕрĕсемпе хĕрарăмĕсен чĕрисенче мĕн тери хăватлă вăй çунса тăнине, Совет Союзĕн патриоткисем мĕнле паттăр ĕçсем тума пултарнине кăтартса параççĕ.

Анчах та эпир хамăрăн тăван çĕршыва ăста хӳтĕлекенсем пулма ĕмĕтленекен пирĕн гражданкăсене ку тарăнччен сахал пулăшса пынă. Эпир вĕсене вăрçă ĕçне сахал вĕрентнĕ. Çак çитменлĕхе пирĕн пĕтермелле. Хамăрăн тăван çĕршыва алла хĕçпăшал тытса хӳтĕлес ĕçе активлăн хутшăнма ĕмĕтленекен тата хăйсен сывлăхне кура хĕçпăшал тытма пултаракан мĕн пур совет патриоткисене çар санитарийĕ енĕпе хатĕрлеме кăна мар, кучухнехи хĕçпăшала вĕренсе алла илме те май туса памалла, пулăшмалла.

Çар специалисчĕсене, тĕл перекен мастерсене: снайперсемпе автоматчиксене, пулеметчиксемпе минометчиксене тата тăшман танкĕсене пĕтерекенсене вĕрентсе хатĕрлес ĕç мĕнпур çĕршывра анлăн саралчĕ. Всевобуч енĕпе çак специальноçсем тăрăх комсомолецсемпе çамрăксенчен уйрăм подразделенисем тăваççĕ. Большевиксен партийĕпе совет правительстви çак пуçарăва питех те пысăк вырăна хурса хаклаççĕ. Мĕнпур парти органĕсен, профсоюзпа комсомол тата Осоавиахим организацийĕсен тӳрĕ тивĕçлĕхĕ вăл — снайперсемпе боец-автоматчиксене, ручной тата станковăй пулеметчиксене, минометчиксемпе танксен истребителĕсене вĕрентсе çитĕнтересси пулса тăрать.

Парти комитечĕсен, всевобуч политорганĕсен вĕренӳ пункчĕсенчи политикăллă воспитани ĕçне çĕклемелле. Анлантарулла ĕçе взысканисемпе улăштарнине хирĕç татăклăн кĕрешмелле. Политруксем тата комсомол организацийĕсем уйăрнă политрук заместителĕсем всевобуч боецĕсен чăн-чăн воспитателĕсем пулма тивĕçлĕ.

Всевобуч боецĕсен ретĕнчен Хĕрлĕ Çара илнисем пуринчен ытларах запаслă чаçсене кĕреççĕ. Запаслă чаçсенче, çавăн пекех тата резерври чаçсенче, всевобуч подразделенийĕсенче вăрçă ĕçне вĕренессине хальхи вăрçăн опычĕпе тачăн çыхăнтармалла, хальхи вăрçăн опычĕ çинче Хĕрлĕ Çарăн воинне вăрçăра ăнăçлă наступлени тума мĕн кирлине вĕрентмелле. Хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çара хĕçпăшаллантарнă вăрçă техникин çĕнĕ тĕслĕхĕсемпе всевобуч боецĕсене анлăнрах та тĕплĕнрех паллаштармалла.

Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем наступленилле çапăçусен паха тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Вĕсем противника çавăрса илме, противникăн хирĕç тăмалли вырăнĕсене хупăрласа илсе хĕссе лартма, тăшманăн оборонине пайăн-пайăн çĕмĕрсе ваклаca вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн пĕтере-пĕтере тăкма, тăшманăн контратакисене сире-сире пăрахма тата тăшмана унăн оборонин мĕнпур тарăмăшне шăтарса кĕрсе поражени кӳме питех те ăста пултарнине татах та тепĕр хут кăтартса пачĕç. Запасри чаçсемпе резерври формированисен задачи — çак искусствăна запасри боецсемпе резерври командирсене вĕрентесси пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çарăн боевой резервĕсене, чăтăмлă та çирĕп дисциплинăллă, вăрçă ĕçне лайăх вĕренсе хатĕрленнĕ резервсене, кирек мĕнле самантра та фашистла йыткĕтĕвĕсене вĕлермеллех пырса çапма пултаракан боевой резервсене, кунран кун ытларах та ытларах ӳстерсе пырар.

(«Правда», мартăн 4-мĕшĕнчи умстатьи).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 4-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç вăйлăн çапăçнă, фронтăн хăшпĕр участокĕсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Мартăн 3-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 3 самолетне персе антарнă, пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 1 самолетне персе ӳкернĕ тата противникăн аэродромĕсем çинче 14 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çак кун нимĕçсен 18 самолетне пĕтернĕ. Пирĕн 6 самолет пĕтнĕ.

* * *

Мартăн 3-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 6 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 120 автомашинине, боеприпассем турттарса пыракан 50 лавне яхăн, 67 орудине, зенитнăй пулеметсен 7 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, чугунçул çинчи 7 вагона çĕмĕрсе тăкнă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем хаяррăн çапăçса противникăн çирĕплетнĕ районне татса кĕнĕ те нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизине пысăк сиен кӳнĕ. Çав дивизин икĕ полкĕн штабĕсене аркатса тăкнă. Тыткăна илнисем пур. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Старши лейтенант Свиридов командир пулса ертсе пыракан подразделенири артиллеристсем (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки эрнери çапăçусем вăхăтĕнче нимĕçсен 25 минометне расчечĕсемпе пĕрлех, 11 орудине, танксене хирĕç пемелли 3 орудине, 32 пулеметне, боеприпассем тиенĕ 12 автомашинине, тĕрлĕрен çар грузĕсем тиенĕ 79 лавне пĕтерсе тăкнă, противникăн пехотине 3 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Москаленко командир пулса ертсе пыракан кавалери чаçĕ (Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки кунсем хушшинче румынсемпе нимĕçсен салтакĕсене 940 çынна пĕтерсе тăкнă тата трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Летчик старши лейтенант Беклишев юлташ вĕçсе çӳренĕ чухне нимĕçсен совет войскисем çавăрса илнĕ 16-мĕш армийĕ йышăнса тăракан района вĕçсе каякан 4 транспортнăй самолетне асăрханă. Вăл нимĕçсен машинисемпе пĕрле тăшманăн аэродромĕ патне вĕçсе çитнĕ те хăйĕн мĕнпур бомбисене çав аэродром çине пăрахнă. Противникăн зенитчикĕсем пеме тытăннă, анчах та вĕсем пирĕн самолета нимĕн сиен те кӳреймен. Аэродром çинче нимĕçсен 5 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец Шакиров юлташ гитлеровецсем вырнаçнă çурт ăшне гранатăсем ывăтса 10 гитлеровеца вĕлернĕ, нимĕçсен ытти 3 салтакĕ тыткăна парăннă. Шакиров юлташ вĕсене хамăр чаçăн штабне илсе пынă.

* * *

Курск облаçĕнче кĕрешекен партизансен Н. юлташ ертсе пыракан отрячĕ тăшманăн тылĕнче халăх пурăнакан пĕр пункта тăшманран тытса илнĕ. Гитлеровецсем çав ялтан партизансене хĕссе кăлармашкăн 4 хутчен хăтланса пăхнă, анчах кашни хутĕнчех вĕсене партизансем вăйлăн персе сапала-сапала янă. Нимĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен виллисене пăрахса хăварса каялла чакнă. Нумаях пулмасть партизансен отрячĕ нимĕçсен çар чаçĕ çине пырса тапăннă. Мухтавлă совет патриочĕсем тăшмана сывăха ярса, вĕсем çине пулеметсенчен тата пăшалсенчен пеме пуçланă. Нимĕçсем хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен вуншар виллисене пăрахса хăварса тарнă.

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсен 480-мĕш пехотнăй полкĕн 3-мĕш батальонĕнче медицина тĕлĕшпе 10 кун хушшинчи ĕçсем мĕнле пулни çинчен батальонри врач Келлер çырнă рапорта тытса илнĕ. Çав рапортра пĕлтернĕ тăрăх, батальонри медицина пункчĕ аманнисемпе чирлисене 105 çынна пăхса янă. Рапортăн юлашки пайĕнче Келлер çапла çырать: «Батальонри çынсен сывлăхĕ начар. Çакă вăл çапăçусенче нумай вăхăт хушши пулнинчен тата хĕллехи тумтирсем çуккинчен килет. Офицерсемпе рядовойсенчен нумайăшне госпитальсенче сыватас пулать. Тăм илтерсе янисем çав тери нумай. Аманнисем хушшинче тĕрлĕ чир-чĕрпе чирлекеннисем питĕ нумай».

* * *

Нимĕçсен 2-мĕш танковăй дивизийĕн 2-мĕш мотострелковăй полкĕнчи 8-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Эрвин Шаль çапла каласа панă: «Эпир сывăракан блиндажра февралĕн 22-мĕшĕнче ирхине граната çуралса кайрĕ. Эпир тула сиксе тухрăмăр та красноармеецсене курах кайрăмăр. Эпĕ, обер-ефрейтор тата унтер-офицер аласене çĕклерĕмĕр те тыткăна парăнтăмăр. Ыттисем тарма хăтланса пăхрĕç, анчах та вĕсене вĕлерчĕç. Каялла чакса пынă вăхăтра пирĕн ротăри 200 салтакран 40 салтак çеç юлчĕ. Вилнисем хушшинче взвод командирĕсем Фельдзенштаунпа Колаус та пурччĕ».

* * *

Дюссельдорф (Германия) сывăхĕнчи хими заводĕнче пушăр пулнă тата урăх çĕршывсенчен илсе килнĕ темиçе çĕр рабочи ĕçлекен цехра взрыв пулнă. Завод корпусĕн ишĕлчĕкĕсем айĕнчен халиччен 192 виле чавса кăларнă. Çав взрыв хыççăн кӳршĕри хими заводĕнчи рабочисем забастовка тунă, влаççем хăратнă пулин те, вĕсем ĕçе тытăнма килĕшмен. Забастовкăна пусарса яраканĕсем тесе, гитлеровецсем итальянецсене 40 çынна çити персе вĕлернĕ.

* * *

Бакури «Сталиннефть» тресчĕн промыслисенчен пĕринче Карапетян мастерăн бригади юсанă скважинăсем, вĕсене ремонт тăвачченхипе танлаштарсан, халĕ 15 хут ытларах нефть параççĕ.

Мартăн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Попов юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) противникăн атакине ăнăçлăн сирсе пăрахнă та, унтан каялла чакакан нимĕçсене хăваласа пырса, темиçе оруди тытса илнĕ. Çав орудисенчен тăшман çине пеме тытăннă. Пирĕн боецсем, ăнăçăва сарса пырса, халăх пурăнакан 3 пункта йышăннă тата нимĕçсенне каллех тепĕр 10 оруди, темиçе пулемет, боеприпассем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 100 ытла вилли выртса юлнă.

* * *

Мартăн 3-мĕшĕнче совет войскисем çавăрса илнĕ нимĕçсен 16-мĕш армийĕн районне фашистсен «Ю—52» йышши икĕ транспортнăй самолечĕ анса ларнă. Çакăн çинчен пирĕн артиллери подразделенийĕн командный пунктне пĕлтернĕ пулнă. Артиллеристсем аэродром çине пеме тытăннă та малтанхи снарядсемпех нимĕçсен самолечĕсене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Иовлев юлташăн чаçĕнчи артиллеристсем (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинче нимĕçсен минометсен батарейине пусарса лартнă, пĕр орудине, икĕ пулеметне пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă.

* * *

Ленинград фрончĕн участокĕсенчен пĕринче сержант Беляев ертсе пыракан совет разведчикĕсен группи гитлеровецсем пытанса ларнă землянкăсем çине гранатăсем ывăтнă. Разведчиксем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 25 çынна вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр нимĕçе тыткăна илсе тата пулемет, темиçе винтовка тытса илсе, разведчиксен группи хăйсен чаçне нимĕн çухатусăрах таврăннă.

* * *

Белоруссири партизанĕсен Ч. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕн кĕрешӳри ĕçĕсен итогĕсене пĕтĕçтернĕ. Отрядри боецсем гитлерла салтаксемпе офицерсене тата полицейскисене 700 çынна ытла строяран кăларнă, тăшманăн грузсем турттарса пыракан 19 автомашинине, икĕ бронемашинине, 30 мотоциклне çĕмĕрнĕ тата вут тивертсе çунтарса янă. Партизансем чугунçула 14 хутчен пăснă, 9 кĕпере взрыв туса сирпĕнтернĕ тата çунтарса янă. Çапăçусенчен пĕринче совет патриочĕсем противникăн радиостанцине тытса илнĕ. Çав радиостанципе отряд кирлĕ вăхăтра хăй усă курнă.

* * *

Нимĕçсен 62-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 164-мĕш полкăн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Георг Дранке çапла каласа панă: «Нимĕç войскисен питĕ пысăк çухатусем пулни салтаксене питĕ хăратать. Пирĕн 3-мĕш батальонра малтан 1000 çын пулнăччĕ, халĕ унта 200 салтак та тăрса юлман пулĕ. 12-мĕш ротăра пĕтĕмпе те 18 çын анчах юлнă. Юлашки çапăçусенче пирĕн полкăн юлашкийĕсене çапса аркатрĕç те пĕтерсе тăкрĕç».

* * *

Тăшманăн окопĕнче нимĕç салтакĕн Гансăн çырăвне тупнă. Çав çырура вăл хăйĕн тăванĕсем патне çапла çырнă: «Халĕ эпĕ питĕ вăйлă çапăçусем пыракан районра тăратăп. Манăн юлташсем пурте вилсе пĕтрĕç. Вĕсем хушшинче Камерад Пфау тата Шамингер. Эпĕ пĕр вырăс хĕрарăмĕн урипчен хывса илнĕ çăматта тăхăнса çӳретĕп, вăл хĕрарăма эпĕ нумаях та пулмасть персе вĕлертĕм. Ыран пирĕн позицисем çине вырăссем килсе тапăнасса кĕтетпĕр. Паллах, эпир пурте вилсе пĕтетпĕр. Пирĕн ниçталла та чакмалли çук, пур çĕрте те вырăссем».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Костино ялне гитлеровецсем çаратса пĕтернĕ тата вут тĕртсе çунтарса янă. Ялти 118 çуртран пĕтĕмпе те 8 çурт анчах юлнă. Нимĕçсен фашистла бандичĕсем Пасынков колхозникне персе вĕлернĕ, Победин колхозникпе унăн арăмне — учительницăна Вера Петровнăна, унăн амăшне учительницăна Елена Ивановнăна, вĕсен ачисене Люсяна, Надяна тата Мишăна пĕр çурта хупнă та чĕрĕллех çунтарса янă.

* * *

Дортмундри (Германия) пур больницăсем те шатраллă тифпа чирленĕ çынсемпе тулса ларнă. Кашни кунах шатраллă тифпа чирленĕ 10-шар çынсем вилеççĕ. Хулара театрсене, киносене, шкулсене хупнă. Дортмунда пырса кĕрес пулсан, Германи влаçĕсенчен ирĕк илес пулать.

* * *

Амур çинчи Комсомольскри судоремонтнăй заводри токарь Вукoлов юлташ васкавлă заказа пурнăçласа сменăра 6 ĕç норми тултарнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлекен оборона войскисен начальствующи составне Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хастарлăхпа геройлăх кăтартнăшăн çаксене **Ленин орденĕпе «Золотая Звезда»** медаль парса **Совет Союз Геройĕн** званине парас:

1. Политрука Алексей Николаевич **Годовикова.**
2. Лейтенанта Иван Филиппович **Голубина.**
3. Старши лейтенанта Евгений Михайлович **Горбачука.**
4. Старши лейтенанта Иван Николаевич **Заболотныя.**
5. Старши лейтенанта Иван Николаевич **Калабушкина.**
6. Лейтенанта Венедикт Ефимович **Ковалева.**
7. Старши лейтенанта Анатолий Григорьевич **Лукьянова.**
8. Старши лейтенанта Василий Николаевич **Матакова.**
9. Старши лейтенанта Николай Николаевич **Морозова.**
10. Старши лейтенанта Иван Михайлович **Холодова.**
11. Лейтенанта Иван Петрович **Шумилова.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти мартăн 4-мĕш.

Тырпулсем юр айĕнчен лайăх тухмалла

Иртнĕ кĕркунне колхозсемпе совхозсем кĕрхи тырпул акса хăварнă çĕр лаптăкĕ, вăрçăчченхипе танлаштарсан, чылай аслăланчĕ. Пуринчен ытла кĕрхи тырпул акнă çĕр лаптăкĕ Çĕпĕрте ӳсрĕ. Кунта нумай районсенче иртнĕ кĕркунне 2—3 хут ытларах кĕрхи тырпул акса хăварнă.

Агрометеорологи станцийĕсем юр айĕнчи тырпула тĕпĕлĕн сăнаса тăхăнни акă мĕне палăртнă: кĕрхи тырпул пур çĕрте те юр айĕнче лайăх хĕл каçать. Шăнса пĕтнĕ тĕлсем ниçта та çукпа пĕрех. Пуринчен ытла ир акса хăварнă тыррă калчисем лайăх хĕл каçни палăрнă. Ку вăл çапла пулма тивĕçлĕ те, мĕншĕн тесен юр айне кĕриччен вĕсем лайăх тĕмĕленсе çирĕпленме ĕлкĕрнĕ. Нумай вăхăт хушши 40 градуслă сивĕсем тăнă пулин те, Çĕпĕрте кĕрхи тырпул пит лайăх хĕл каçнă. (ТАСС).

Тăван çĕршыва сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлекен оборона чаçĕсен тата Мускав хулине сывлăшран тапăнассинчен хӳтĕлекен вырăнти оборона чаçĕсен начальствующи тата рядовой составне орденсемпе тата медальсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, наградăланă:

ЛЕНИН орденĕпе — 20 çынна: кĕçĕн лейтенанта **С. В. Ачкасова**, лейтенанта **М. М. Бабушкина**, старши политрука **Н. П. Баскова**, лейтенанта **Л. Т. Горячкона** т. ыт. те.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе — 157 çынна: лейтенанта **П. И. Александрова**, старшинана **О. М. Алексеева**, сержанта **В. И. Андреева** т. ыт. те.

ХĔРЛĔ ÇАЛТĂР орденĕпе — 173 çынна: старши лейтенанта **С. К. Абрамова**, 2-мĕш рангри военинженера **Г. С. Азатяна**, 1-мĕш рангри воентехника **И. А. Алексеева** т. ыт. те.

«ЗНАК ПОЧЕТА» орденĕпе — 8 çынна;
«ЗА ОТВАГУ» медальпе — 66 çынна;
«ЗА БОЕВЫЕ ЗАСЛУГИ» медальпе 98 çынна наградăланă.

Кăнтăрта çуртри акаççĕ

МАХАЧ-КАЛА, мартăн 3-мĕш. (ТАСС). Дагестанра çуртри акма пуçланă. Карабудахкент районĕнчи Ленин ячĕпе, Куйбышев ячĕпе тата Микоян ячĕпе тăракан колхозсем типпĕ участоксене суйласа урпа акаççĕ. Республикăн çурçĕр пайĕнче чи малтан сĕлĕ акма тытăннă.

Сталин юлташăн приказĕ аулсенчи халăха вăйлă тырпулшăн кĕрешме хавхалантарчĕ. Колхозниксем ĕç вăхăчĕпе туллин усă кураççĕ, вĕсем акас вăхăтăн срокĕсене кĕскетме тăрăшаççĕ.

Карабудахкент районĕнчи малта пыракан колхозсем малтанхи кунсенчех суха тума мĕнпур машинăсене, ĕçлеме пултаракан выльăха илсе тухнă. Аксайри МТС сухара «Универсал» тракторсемпе ăнăçлăн усă курать.

* * *

ЧИКМЕНТ, мартăн 3-мĕш. (ТАСС). Çĕрмамăкĕ акса тăвакан «Пахта-Арал» совхозра çĕрмамăкĕ акма сухана тухрĕç. 2.000 гектар ытла çĕре сухаланă. Çитес çывăх кунсенчех совхоз тĕштырăсем акма пуçлать.

Мускаври архитекторсем ирĕке кăларнă районсене пулăшаççĕ

МУСКАВ, мартăн 4-мĕш. (ТАСС). Мускаври архитекторсем, инженерсемпе тата технологсемпе пĕрле, Мускав облаçĕн нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă хулисемпе поселокĕсем валли çĕнĕ çуртсен, кварталсен проекчĕсемпе ĕç чертежĕсем хатĕрлеççĕ. Гитлеровецсем çĕмĕрсе çунтарса пĕтернĕ колхозсем вырăнне çĕнĕ колхозсем организацилесе вырнаçтарма проектсем хатĕрлеççĕ. Çак кунсенче архитекторсен группи Волоколамск тата Новопетровск районĕсенчи колхозсене тухса кайрĕç.

Куçса килнĕ ачасене пулăшаççĕ

КУКЕÇ. Поселокри килхуçи хĕрарăмĕсем куçса килнĕ ачасене ăшшăн пулăшаççĕ. Вĕсене тумтирсем, кĕпейĕмсем, çăматăсем параççĕ. Çак кунсенче А. Федорова юлташ куçса килнĕ ачасене пĕр мулаххай, кĕпе, икĕ метр мануфактура, А. Шоркевич çыхнă кĕпе, пĕр мăшăр чăлха, пĕр кĕпе, Л. Иванова пĕр мăшăр çăматă, майка, В. Караушева валкă хурса çĕленĕ пальто, А. Ластухина пĕр мăшăр çăм алшиш, Н. Ведина пĕр мăшăр ăшă перчатка, О. Филиппова майка, пĕр мăшăр чăлха пачĕç.

И. ВАСИЛЬЕВ.

Йĕлтĕрсем тăвас ĕçри паха сĕнӳ

Чăвашдревпромсоюз техникĕ Черкасов юлташ йĕлтĕрсем тумалли йывăçсене типĕтес ĕçе механизацилемелли сĕнӳ панă. Куславкка районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан леспромартель техрукĕ Пальцев юлташ çав сĕнӳ сумне хăшпĕр улшăнусем хушнă. Халĕ леспромартельре йĕлтĕрсем тумалли йывăçа 7—8 кун хушши типĕтес вырăнне 2 сехет хушши кăна типĕтеççĕ. Йывăçăн пахалăхĕ 7—8 кун хушши типĕтнинчен пĕрре те кая мар. Çак мероприяти ĕç вăйне чылай перекетлерĕ, ĕçе çăмăллатрĕ. Халĕ ку ĕçе 14 çулти ача çăмăллăнах туса пырать.

Ф. КОНДРАТЬЕВ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Пирӗн танкистсемпе пехотинецсем арӑслан пек ҫапӑҫаҫҫӗ

КАЛИНИНСКИ ФРОНТ, мартӑн 3-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Н-ски чаҫӑн соединенийӗ, тӑшманӑн хаяррӑн хирӗҫ тӑракан вӑйӗсене ҫӗмӗрсе пырса, икӗ кун хушшинче 1.100 гитлеровеца ытла пӗтерсе тӑкнӑ, ҫак вӑхӑтрах нумай танксем, орудисем, минометсем, пулеметсем тата боеприпассем тытса илнӗ.

Пирӗн мухтавлӑ танкистсем нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене ӑнаҫлӑн ҫӗмӗрсе пыраҫҫӗ, ку операцисене вӗсем пехотӑн ӗҫӗсемпе ҫыхӑнтарса тӑваҫҫӗ. Даниловпа Фокин лейтенантсен танк экипажӗсем Н. ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче, тупӑсенчен персе тата гусеницӑсемпе таптаттарса, противникӑн танксене хирӗҫ пемелли 3 орудине, пулеметсен ҫирӗплетнӗ 10 точкине, бронемашинине тата фашистсен пӗр взводне пӗтерсе тӑкнӑ, нумай трофейӑсем тытса илнӗ.

Взвод командирӗ кӗҫӗн лейтенант Раков вӑрман хӗррине вырнаҫса ларнӑ противника ҫапса кӑлармa приказ илнӗ. Ҫапӑҫу вӑхӑтӗнче Ракова амантнӑ, анчах ҫапах та вӑл тӑшмана хирӗҫ малалла пыма чарӑнман. Вӑйлӑ ҫапӑҫу пынӑ хушӑра Раков иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш, тӑваттӑмӗш тата пиллӗкмӗш хут суранланнӑ, вӑл ҫав-ҫавах ҫапӑҫуран пӑрахса тухман.

— Тӑван ҫӗршывшӑн малалла, юлташсем!—тесе чӗннӗ вӑл хӑйӗн боецӗсене. Ҫакна кура унӑн боецӗсем тӑшмана хирӗҫ арӑслансем пек ҫапӑҫнӑ, хӑраса ӳкнӗ фашистсем пӗр йӗркесӗр тарма тытӑннӑ.

Н-ски чаҫри пехотинецсем паха пунктшӑн пынӑ тӑватӑ кун хушшинчи ҫапӑҫусенче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсене 600 ҫынна яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ. Гитлеровецсем ҫак пунктран чакса тухса каяс умӗн нимӗҫсен ҫар командованийӗ хӑйсен амантнӑ салтакӗсене пӳртсемпе сарайсене пухса, ҫунтарса яма хушнӑ.

Г. КОРЯВИЧЕВ.

Партизансем тӑшмана аркатаҫҫӗ

ҪУРҪӖР-ХӖВЕЛАНӐҪ ФРОНЧӖ, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС спецкорӗ). Партизансен темиҫе отрячӗ пӗрлешнӗ те, В. юлташ командир пулса ертсе пынипе, Д. поселокпа станци ҫине тата ҫав районри халӑх пурӑнакан чылай пунктсем ҫине хӑюллӑн тапӑннӑ. Кусенче пуринче те нимӗҫсен пысӑк гарнизонӗсем вырнаҫса тӑнӑ.

Пӗр талӑк хушши Д. поселокпа станцие партизансем хӑйсен аллинче тытса тӑнӑ. Пӗлсе тата пит те йӗркеллӗ организациленӗ тапӑнни ӑнаҫлӑ пулнӑ. Партизансем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 852 ҫынна вӗлерсе пӗтернӗ, 40 ҫынна тыткӑна илнӗ, боеприпассен складне пӗтерсе тӑкнӑ, 13 огневой точкӑна ҫӗмӗрнӗ. Туллимар даннӑйсем тӑрӑх, вӗсем нимӗҫсенне 9 пулемет, 5 автомат, 100 винтовка ытла, 19.000 патрон, тӗрлӗрен пурлӑх тиенӗ 69 лав тата хресченсенчен нимӗҫсем туртса илнӗ 58 пуҫ мӑйракаллӑ шултра выльӑх тытса илнӗ.

Чугунҫул кӗперне сирпӗнтерсе ярса, партизансем хӑйсем тӑракан вырӑнсене тавӑрӑннӑ.

Ю. КОРОЛЬКОВ.

Пулас лейтенантсем

— Эх, мӑнтарӑн вӑхӑчӗ, мӗншӗн ҫав тери час иртет-ши вӑл? Халь кӑна ылттӑн кӗркуннеччӗ, кӗмӗл ҫуркунне те ҫывхарать ӗнтӗ ак...

Эпир ҫапла калаҫса тӑнӑ ҫӗртенех Шупашкара ҫӑса илтӗмӗр. Ҫӑнах та ылттӑн кӗркуннеччӗ унчухне, пӗтӗм станцӑна халӑх тулнӑччӗ, кашниех вӗсенчен: хӑшӗ савнӑ тусне, хӑшӗ савнӑ мӑшӑрне, хӑшӗ юратнӑ ывӑлне е тата юратнӑ аппӑшне ӑсатма пынӑччӗ; ҫамрӑксем хаяр тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма каятчӗҫ.

Эпир И. Алтын-Баш журналистпа пӗр вагон ҫинче пыраттӑмӑр.

— Орденсӑр-медальсӑр ан тавӑрӑнӑр, ачамсем... Германие пирӗн ӗмӗрне те парӑнман... Вунтӑваттӑмӗш ҫултан пуҫласа хам та пит лайӑх хӗртнӗ ӑна,— калаҫать пирӗнпе пӗр ватӑ ҫын,—кайран Украинӑран та шӑхӑртса кӑларса ятӑмӑр...

Кавраххпа эпир ҫав ватӑ колхозник ҫинчен ытларах пӗлтӗмӗр. Вӑл хӑйӗн ывӑлӗсем ҫуккишӗн пӑшӑрханать, халӗ хӑйӗн тӑван хӗрне, Хусанта кӑҫал ҫеҫ мединститут вӗренсе пӗтернӗскере, фронта ӑсатать иккен, кашт «хӗрӳкӗллӗ» пулнӑ пирки веҫех каласа пачӗ, ҫӑмах-юмахшӑн кӗсъене шӑмест.

Вагон чӳречи витӗр ҫӗмел-суралсем курӑнаҫҫӗ, пиҫсе ҫитнӗ тулӑсене выракан хӗрарӑмсем шурӑ тутӑрсем сӗлтеҫҫӗ.. Кашни тулӑ пучахӗнчех пирӗн тулӑх пурнӑҫ курӑнать, ӑна эпир хамӑр ик алӑ вӑйӗпе ӗҫлесе акса ӳстернӗ, ӑҫтан парӑн ҫавна тӑшмана? Чунӑмӑра илсен те парас ҫук, ан кил яхӑна, саҫӑн мар вӑл пурлӑх,—пирӗн!..

Пирӗн старик ҫак шухӑшсене калать. Ирӗксӗрех вара шӑпах ҫичӗ ҫӗр ҫул ӗлӗкрех нимӗҫ йытти-рыцарӗсене пирӗн асаттесен аслашшӗсем пӗрлӗ кӳлӗ тӗпне чыхӑнтарнине те аса илетӗп. Пулнӑ вӑхӑтсем. Аслӑ вырӑс халӑхӗ нихӑҫан та никама парӑнман. Берлин хулин ҫӗраҫҫи те Мускаври музейре выртать..

* * *

Ока шывӗн илемӗ ҫинчен каласа е ҫырса пӗтерме те ҫук. Вӗреннӗ ҫынсем, вӑл шыва Атӑлран та аслӑрах, теҫҫӗ. Анчах кунта ун ҫинчен ҫырсах каясшӑн мар эпӗ. Ҫӑмах урӑх ҫинчен пырать.. Пирӗн Н-ски лагерь вӑрманта, Ока хӗррипче вырнаҫса тӑратчӗ. Ире хирӗҫ горнист сигналӗ ҫирӗп те янӑравлӑн кӗввине шӑрантарса ярсан, ылттӑн ҫулҫӑсем хушшипе шуррӑн курӑнса ларакан палаткӑсенчен хаки-хур карти пек тухакан курсантсем тӳрех Ока хӗрне пит ҫума чупатчӗҫ. Лагерьтен ҫӳлерех кӗпер, шывӑн леш енче аслӑ улӑх тӑсӑлса выртать, улӑх хӗррипе пӗтӗкҫӗ ялсем лараҫҫӗ, сулахай енчен, вӑрман хыҫӗнчен, хӗвел ҫӗкленсе тухать, ҫӗкленсе тухать те вӑл шин тӗслӗ ярасине Ока шывӗ ҫине сапать; хӑмӑш хушшинче, ӗлӗкке вырӑнта, шур сухаллӑ старикпе мӑнукӗ хуллен утса ҫӳреҫҫӗ, аял енчен пӗчӗкрех пароход улӑхни курӑнать, шӑлтах ӳкерчӗк ҫинчи ӗнтӗ! Эх, мӗн чухлӗ-ши пирӗн виҫсе тухма ҫук аслӑ тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн ҫавӑн пек илемлӗ вырӑнӗсем?..

Ока хӗрринчи кунсем хаяр юлчӗҫ ӗнтӗ. Унчухне кӗркунне пулнӑ, халӗ— шартлама хӗлле. Унчухне нимӗҫсен вӑрӑ-хурах ушкӑнӗсем чаҫрах Мускава ҫитсе, ноябрӗн 7-мӗшӗнче хӑйсен ӳсӗр те ирсӗр ушкӑнӗпе Мускав тӑрӑх ахӑрса иртме ӗмӗтленнӗ. Иртрӗҫ вӑл кунсем. Халӗ тӑшман шутласа ӗлкӗрме ҫук йӗрӗнтӗк вилесем хӑварса каялла ыткӑнать. Кӗрейммерӗҫ Мускава фашистсем Гитлер, Мускав урамӗсене биноклӗпе пӑхса курасшӑнччӗ, хӑйӗн [illegible] куҫӗсемпе чаплӑ Мускав урамӗсем вырӑнне фашистла йытӑсен масарӗсем ҫинчи хӗрессене ҫеҫ курать. Мускав ҫинчен, вӑл тунӑ ҫӗнтерӳсем ҫинчен пӗтӗм тӗнче калаҫать.

..Ҫапла ӗнтӗ, Ока шывӗ хӗрринче ҫав тери илемлӗччӗ, терӗмӗр; Н-ски ҫар шкулӗнчи курсантсем вӑрҫӑ ӗҫне хӗрсе вӗренетчӗҫ, терӗмӗр. Анчах кӗрхи кунсенчен пӗри курсантсен асӗнчен ӗмӗрне те тухас ҫук. Шӑпах кӑнтӑрлахи апат тӗлӗнче тревога сасси пӗтӗм лагере янӑраса кайрӗ.

Курсантсем пӗр самант хушшинче хатӗрленсе тӑчӗҫ. Поход. Тӑшман ҫулне пӳлме, унӑн хурҫӑпа витӗннӗ ҫарне кӑкӑрпа тӑрса пӳлме—курсантсен фронта тухса кайма тиврӗ.

..Поезд каллех ыткӑнать малалла. Анчах вагон чӳречисенчен ҫӗмел-суратсем курӑнмаҫҫӗ ӗнтӗ, шурӑ тутӑр сӗлтсе ӑсатакансем те ҫук. Вӗсем ҫине фашист ҫӑханӗсем ним хӗрхенмесӗр вилӗм тӑхланӗ тӑкма пултараҫҫӗ,—вӗсемшӗн айӑпсӑр ачасемпе мирлӗ хӗрарӑмсене тата старике сене вӗлересси кулӑшла ӗҫ кӑна; кунта халӗ пиҫсе ҫитнӗ тулӑ пучахӗсем те ырӑ хуҫине пуҫтайса сывлӑх сунмаҫҫӗ, вӗсене тахҫанах пуҫтарса иртетри тыла—хамӑр тыла ӑсатнӑ. Кунта танксем кӗмсӗртетеҫҫӗ, самолетсем вут тӑкаҫҫӗ, тупӑсем ҫӗре кисрентереҫҫӗ, пулеметсем тӑхлан пӗрӗхеҫҫӗ. Кунта — фронт, вӑрҫӑ!

Кӗрхи кунсенче курсантсен чи пирвайхи хут вилӗмпе хире-хирӗҫ, куҫа-куҫӑн тӑма тиврӗ. Вӑл кун ирпеле Шупашкарти юлташсенчен пӗри И. Васильев юлташ пирӗнтен ӗмӗрлӗхех уйӑрӑлчӗ, чылай юлташсем йывӑр аманчӗҫ. Чӑваш пединститутӗн юлашки курсӗнче вӗреннӗ Андрей Марков, хӑй ҫав тери йывӑр аманнӑ пулсан та, вӑрҫӑ уйӗнчен тухман. Вӑл пистолет-пулеметпа пӗччен 40—50 гитлеровеца ытла пӗтернӗ.

— Хамӑрӑн иҫе те мар, пӗр мунча ҫумӗнче нимӗҫ автоматчикӗ пирӗн ҫине шатӑртаттарса выртать,—тет вӑрҫӑран аманса тухнӑ хыҫҫӑн Я. Л. Зверев (Первомайски район, Шетмӗсем),— темиҫе хут тӗллесе пенӗ хыҫҫӑн пӑнчах пулчӗ хайхи, унтан ӑшӑм тӑвӑлтса ҫитнипе виллине тепӗр хут пырса чиксе килчӗ.

..Ҫар округӗ панӑ задание пирӗн Н-ски ҫар шкулӗ тивӗҫлӗ таранах пурнӑҫларӗ. Халӗ эпир пурте пӗр ҫӗрте. Эпир ҫитес кунсенчех вӗренсе тухса лейтенантсем пулатпӑр.

Пирӗн шкулта тӗрлӗ халӑх ҫынни вӗренет: чӑвашсем, марисем, мордвасем, грузинсем, киргизсем, еврейсем т. ыт. те. Вӗсем пурте пӗр тӑван пек ҫывӑх пурӑнаҫҫӗ.

Чылай курсантсене (чӑваш ачисене те) сержант званине панӑ. Я. Муратов, А. Лебедовский, А. Воробьев, П. Щипцов, В. Соколов, И. Гаврилов, Я. Иванов тата ытти юлташсем те сержантсем пулса ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ эпир ҫӗнӗ хӗҫпӑшалсене, пуринчен ытла ҫарӗҫ тактикине лайӑх вӗренетпӗр. Пирӗн, пулас лейтенантсен, таса вӑрҫӑ хирне хамӑр тӑван ҫӗршывшӑн паттӑр красноармеецсене ертсе кӗмелле.

..Хамӑрӑн аслӑ ҫӗршывӑмӑра тӑван анне юратнӑ пек юратни—пире паттӑррӑн ҫапӑҫма хавхалантарать. Нумаях пулмасть эпир тӑван ҫӗршыва юлашки тумлам юн юлмиччен сыхлама тупа турӑмӑр. Пирӗн курсантсем хӑвӑртрах вӗренсе тухса фронта кӗме васкаҫҫӗ. Ҫапӑҫас килет, ҫӗнтерес килет!

Курсант В. БАРАЕВ.

Рузвельт ҫар хатӗрӗсем туса кӑларакан производствӑна ӳстерсе пыма чӗнсе калани

Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен президенчӗ Рузвельт вӑрҫӑ ӗҫӗнче кирлӗ снаряженисем туса кӑларассине ӳстерсе пымашкӑн пур майсемпе те усӑ курма хушнӑ. Рузвельт «кӑҫалхи ӗҫе татса паракан ҫуркунне вӑхӑтӗнче ҫар хатӗрӗсем тӑвакан производство ҫав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине» кӑтартса панӑ.

Ҫар хатӗрӗсем туса кӑларакан производство тӗлӗшпе ӗҫлекен управленин руководителӗ Нельсон ҫавна май радио тӑрӑх чӗнсе каланӑ. Хӑйӗн сӑмахӗнче вӑл, производствӑна ӳстерсе пымалли кампание ертсе пымашкӑн рабочисемпе администрацин представителӗсенчен пӗрлешӳллӗ комитетсем тума чӗнсе каланӑ. Нельсон хӑйӗн сӑмахӗнче 1942-мӗш ҫулта 60.000 ҫар самолечӗ, 45.000 танк, 20.000 зенитнӑй оруди туса кӑлармашкӑн тата суту-илӳ суднисем ҫӗнӗрен 8.000.000 тоннӑлӑх тумашкӑн Рузвельт кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫа кӗртсе пыма кирли ҫинчен уйрӑмах палӑртса хӑварнӑ.

Хальхи мӗнпур механизмсемпе пуринпе те лайӑхрах усӑ курсан, продукци туса кӑларассине 25 процентран кая мар ӳстерме май пур, тенӗ вӑл. (ТАСС).

Черчилль портра ӗҫлекен рабочисем патне янӑ послани

ЛОНДОН, мартӑн 2-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, предпринимательсен, портра тата транспорт хуҫалӑхӗнче ӗҫлекен рабочисен конференцийӗнче февралӗн 28-мӗшӗнче Лондонра Черчиллӗн посланине вуласа панӑ. Ҫав посланире Черчилль портсенче суднӑсене хӑвӑртрах пушатса тиесси мӗн тери паха вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартса панӑ. Посланире ҫапла каланӑ: «Эпир ҫӗнӗ суднӑсем нумай тӑватпӑр. Анчах халӗ пирӗн хамӑрӑн ресурссене пысӑклатас, суднӑсене хӑвӑртрах ҫӳремелле тӑвас тӗлӗшпе мӗн кирлине пурне те тумалла. Суднӑсем портра тӑрассине пӗр кун чакарни те пирӗн суту-илӳ флотӗнчи суднӑсен ҫаврӑнӑшне хӑвӑртлатма пулӑшать».

Парижра заложниксене персе пӑрахни

ЖЕНЕВА, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). Гитлеровецсем Парижра тунӑ ҫӗнӗ преступлени кунти халӑха питех те тарӑхтарать. Гавас-ОФИ агентстви ҫапла пӗлтерет: Парижра нимӗҫсен икӗ хуралҫине вӗлернӗ. Ҫавӑн пирки нимӗҫ оккупанчӗсем татах 20 француз-заложнике персе пӑрахнӑ. Германин Парижри влаҫӗсем мартӑн 16-мӗшӗнчен хуралҫӑсене вӗлерекенсене тупса памасан, нимӗҫсем татах 20 ҫынна персе пӑрахаҫҫӗ, тесе хӑратаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне гитлеровецсем ҫапла пӗлтернӗ: нимӗҫсен хуралҫисене пытарнӑ кун Парижра пур театрсемпе киносем те, ресторансем те ӗҫлемеҫҫӗ, хупӑ пулаҫҫӗ.

Румыни халӑхӗ нимӗҫ оккупанчӗсене кураймасть

ЛОНДОН, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). Афи агентствин Анкарари корреспонденчӗ ҫапла пӗлтерет: Гитлер хушнӑ тӑрӑх Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтне Румыни салтакӗсене пӗр вӗҫӗмех ярса тӑни Румыни халӑхне ҫав тери тарӑхтарса ҫитернӗ. Совет Союзӗпе Германи хушшинчи вӑрҫӑ фронтӗнчен Румыние аманнӑ ҫынсем тиенӗ поездсем пӗр вӗҫӗмех пырса тӑни Румыни халӑхӗн шухӑш-кӑмӑлне пӑсать. Румыние аманнӑ ҫынсене уйрӑмах февраль уйӑхӗнче нумай илсе килнӗ, ҫавна пула Румынири чугунҫулсем тӑрӑх, ҫар ҫыннисемсӗр пуҫне, ахаль ҫынсене никама та лартман. Аманнӑ ҫынсем Антонескупа Гитлера усҫӑнах ылханаҫҫӗ тата румынсене хӗсӗрленӗшӗн пӗтӗмӗшпех нимӗҫсене айӑплаҫҫӗ.

Англи правительствин составӗнче ҫӗнӗ улшӑнусем пулнӑ

ЛОНДОН, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). Рейтер агентстви Англи правительствин составӗнче пулнӑ ҫӗнӗ улшӑнусем ҫинчен пӗлтерет. Ҫав улшӑнусем тӑрӑх правительствӑн 5 членӗ отставкӑна тухаҫҫӗ, парламентӑн 6 членӗ правительствӑра постсем йышӑнаҫҫӗ.

Генеральнӑй стряпчий Уильям Джоуитт лорд Хэнки вырӑнне генеральнӑй казначей пулать. Кунсӑр пуҫне вӑл вӑрҫӑ хыҫҫӑн пулмалли реконструкци ыйтӑвӗсене вӗренсе пырать. Джоуитт вырӑнне генеральнӑй стряпчий пулма Кейсуэлла уйӑрнӑ. Адмиралтействӑн граждӑнла лорд пулма Хадсон капитан вырӑнне Пилкингтон капитана уйӑрса лартнӑ. Доминионсен ӗҫӗсен министрӗн заместителӗ пулма Шекспир вырӑнне Элерис-Эманса лартнӑ. Алан Чепмен вырӑнне почтӑпа телеграф министрӗн заместителӗ пулма Гримстона уйӑрнӑ. Алан Чепмена отставкӑна тухакан Уэдерборн капитан вырӑнне Шотланди ӗҫӗсен министерствин парламентри секретарӗ пулма уйӑрса лартнӑ. Ҫар снабжени министрӗн заместителӗ пулма Пита уйӑрнӑ. Артур Гендерсон ҫар министрӗн заместителӗ пулать.

Ҫӗнӗрен строительнӑй ӗҫсен министрӗн заместителӗн должноҫне тӑваҫҫӗ. Ку поста Штраус йышӑнать, унӑн планировани ӗҫне ертсе пымалла.

Оккупантсем Балканри халӑха хӗсӗрлени

Балкана оккупацилленӗренпе гитлеровецсем югославсене 400.000 ҫынна хӑйсен вырӑнӗсенчен хуса кӑларса янӑ. Вӗсем пурте килҫуртсӑр, апат-ҫимӗҫсӗр тӑрса юлнӑ, нумайӗшӗ выҫӑпа вилсе пӗтнӗ.

Грецире Болгари войскисем йышӑннӑ Македонипе Фракирен темиҫе вунӑ пин ҫемьене, хӑйсен вырӑнӗсенчен хуса кӑларса, Грецин шалти ҫӗрӗсем ҫине янӑ.

Болгари правительстви халӗ тата Югославипе Грецин хӑй оккупациленӗ районӗсенчен вуншар пин югославсемпе грексене хӑйсен вырӑнӗсенчен хӑваласа яма хатӗрленет. Хуҫисене кӑларса янӑ ҫӗрсенче Германирен тата Болгарирен килнӗ «шанчӑклӑ» ҫынсем вырнаҫса лараҫҫӗ. (ТАСС).

Румынире вилекенсен шучӗ ӳссе пырать

Румынире тухса тӑракан «Уневерсул» хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, Румынире вилекенсен шучӗ ӳссех пырать. Уйрӑмӑнах ачасем питӗ нумай вилеҫҫӗ. Вилекенсем уйрӑмах ялсенче ҫав тери нумай, мӗншӗн тесен унта врачсем ҫукпа пӗрех. Хаҫат сывлӑха сыхлас ӗҫ министрӗ Томеску сӑмахне илсе кӑтартать. Ҫав министр каланӑ тӑрӑх, аптекӑсем те, тата питӗ те васкавлӑ пулӑшу кирлӗ чухне медикаментсем илмелли урӑх тӗрлӗ пунктсем те ҫук ял общинисем Румынире 1.200 шутланаҫҫӗ. (ТАСС).

Англи авиацийӗ Париж ҫывӑхӗнчи вырӑнсем ҫине тата Германи порчӗсем ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ

Мартӑн 4-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле Англи самолечӗсем Париж хули ҫывӑхӗнчи Рено завочӗ ҫине бомбӑсем пӑрахнӑ. Ҫав заводра Германи валли грузовиксем, танксем тата авиаци моторӗсем тӑваҫҫӗ.

Ҫав ҫӗрех тата Германин «Шарнгорст», «Гнейзенау» линкорӗсем пытанса тӑнӑ Киль тата Вильгельмсхафен порчӗсем ҫине вӗҫсе пырса тапӑннӑ. Киль ҫине 3-мӗш ҫӗр ӗнтӗ тӑтӑшах ӑнаҫлӑн бомбӑсем пӑрахнӑ. (ТАСС).

Лӑпкӑ океан ҫинчи вӑрҫӑ

АМЕРИКА ПӖЛТЕРЕВӖСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). Официальный йӗркепе пӗлтернӗ тӑрӑх, Минданао утравӗнчи Замбоанга районӗнче (утравӑн Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ пайӗнче) японецсем ҫӗнӗрен десант антарнӑ. Хулара пушарсем тухнӑ. Японин ҫар карапӗсем, ҫав шутрах крейсерӗсемпе эсминецӗсем те, Филиппин архипелагӗнчи утравсен хӑшпӗр порчӗсем ҫине персе тӑраҫҫӗ. Японецсем Себу, Аргао (Себу утравӗ ҫинче) тата ытти утравсем ҫинчи чылай хуласене атакӑланӑ.

Джильберт утравӗсенчен хӗвеланӑҫ енчерех Америкӑн флотилийӗ ҫине Япони самолечӗсем пырса тапӑннӑ чухнехи сывлӑшри ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 16 самолетне персе антарнӑ.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙӖН КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИСЕМ

БАТАВИЯ, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). Голланди Индийӗн командованийӗ кӑларнӑ коммюникере кӑтартса панӑ тӑрӑх, Японин десанчӗсем анса юлнӑ районсенче Голланди Индийӗн войскисем вӑйлӑ операцисем туса пыраҫҫӗ, наступлени тума тӑрӑшаҫҫӗ. Японецсем хӑйсен йыш тӗлӗшпе, уйрӑмах авиаци енӗпе, вӑйӗ пысӑкрах пулнӑ пирки кӑна хӑшпӗр участоксенче кӑшт малалла куҫма пултарнӑ.

Голланди Индийӗн самолечӗсем японецсем йышӑнса илнӗ аэродромсем ҫине атака тунӑ вӑхӑтра ангарсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Японецсен зенитнӑй батарейи вырнаҫнӑ тӗле бомбӑсем тӗл ӳкнине палӑртнӑ. Японецсен чылай бомбардировщикӗсене пулеметсенчен пенӗ.

ЯПОНИ ПӖЛТЕРӖВӖСЕМ

ТОКИО, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). Домей цусин агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Япони войскисем Ява утравӗ ҫинче Батавипе Бандунг хушшинчи чугунҫул ҫинче стратеги тӗлӗшпе паха пункта йышӑнса илнӗ.

Япони войскисен малта пыракан пӗр чаҫӗ Бандунгран 30 миля айккарах вырнаҫнӑ пункта ҫитнӗ. Японин тепӗр отрячӗ Батавия патне 50 миля таран ҫывхарнӑ.

Америкӑн снабжени ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗҫлекен миссийӗ Индие кайма хатӗрленет

НЬЮ-ЙОРК, мартӑн 4-мӗш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем ҫитес ҫывӑх вӑхӑтсенчех снабжени ыйтӑвӗсем тӗлӗшпе ӗҫлекен миссие Индие яраҫҫӗ. Ҫак миссин ӗҫӗсене Рузвельтӑн личнӑй представителӗ ертсе пырать. Паллӑ сведенисем тӑрӑх, Америка специалисчӗсем Инди салтакӗсем валли пӗчӗк калибрлӑ хӗҫпӑшал производствине Индирех нумайрах туса кӑларма пулӑшаҫҫӗ. Ҫакнашкал хӗҫпӑшалпа халӗ ӗнтӗ пӗр миллион ҫынна яхӑн хӗҫпӑшаллантарнӑ.

Двухсотниксен хисепӗ ӳсет

ҪӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). СССР Оборона Халӑх Комиссарӗ Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа кӑларнӑ приказ ҫине комбинатри рабочисемпе работницӑсем большевикла ӗҫпе ответлеҫҫӗ. Хальхи вӑхӑтра цехсемпе сменӑсенче, бригадӑсенче социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса пырать.

Блувштейн юлташ ертсе пыракан цех февраль уйӑхӗн планне Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ уяв тӗлне пурнӑҫланӑ. Кун хыҫҫӑн цеха тата тепӗр васкавлӑ заказ тума пачӗҫ. Коллектив ӑна та срокчен туса пӗтерчӗ.

Цехра двухсотниксен йышӗ ӳссех пырать. Пӗр уйӑх каялла ку цехра 7 — 8 двухсотник пулнӑ, халӗ вӗсем вуншарӑн шутланаҫҫӗ. Комсомолец оправщик М. Осипов февраль уйӑхӗн иккӗмӗш пайӗнче, вӑтамран илсен, кашни кунах ӗҫ нормине 236 процент тултарса ӗҫленӗ. В. Уткинпа И. Егоршин юлташсем январь уйӑхӗнче икшер норма тултарса пынӑ, февралӗн юлашки кунӗсенче вара вӗсем виҫшер норма ытларах тултарма тытӑннӑ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе юлашки вӑхӑтра орденоносец Г. Бурлаков юлташ уйрӑмах паха тӗслӗхсем кӑтартать. Вӑл кӗске вӑхӑт хушшинчех ҫӗнӗ профессипе ӗҫлеме вӗренчӗ, халӗ кулленхи задание икӗ хут, уйрӑм кунсенче икӗ хут та ытларах тултарать.

СССР Оборона Халӑх Комиссарӗ Сталин юлташ приказне сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн Данилов юлташ ертсе пыракан цехри рабочисем хушшинче те ӗҫри хастарлӑх ӳсрӗ. Цех коллективӗ, вӑтамран илсен, кашни кунах хӑйне панӑ плана иртерсе тултарать. Паллӑ стахановец, сборщик Карпов юлташ кулленех нормӑна 4—5 хут иртерсе тултарать. Сӑмахран, февралӗн 23-мӗшӗнчен пуҫласа вӑл нормӑна кашни кунах 480-шар процент тултарса ӗҫлет. Унпа пӗрле ӗҫлекен Баландаев, Ибрагимов, Московкин, Баймуков юлташсем те ӗҫ тухӑҫлӑхне 2,5—3 хут ӳстерсе ӗҫлеҫҫӗ.

Комбинатра халь стахановла бригадӑсемпе сменӑсем те сахал мар. Хӑма ҫуракан цехра кӑна темиҫе бригада плана 150—200 процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Вуннӑмӗш номерлӗ цехри Сотников, Клочков, Сорокин тата Чернов юлташсем ертсе пыракан сменӑсем заданисене куллен 150 процент таран тултараҫҫӗ. Чернов юлташ сменинче нормӑна тултарайманнисем кӑна мар, нормӑна 180 процентран кая тултаракансем те ҫук, вӗсенчен 98 проценчӗ двухсотниксемпе трехсотниксем.

Производствӑра хӗрарӑмсем те пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем сложнӑй операциллӗ ӗҫсем тӑвас тӗлӗшпе арҫынсенчен пӗртте юлмаҫҫӗ. Вуннӑмӗш номерлӗ цехра чылай хӗрарӑмсем нормӑсене икшер хут иртерсе тултараҫҫӗ. Сӑмахран, оклейщицӑсем А. Раева, К. Хитева, М. Поршнева, К. Казакова, А. Чекменева, М. Байракова февралӗн 15-мӗшпе 23-мӗш хушшинче кашниех нормӑсене 220—255 процент тултарса ӗҫленӗ, халӗ те вӗсем ҫавӑн пекех тухӑҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

Комсомолка И. Садовникова юлташ производствӑна кӑҫалхи январь уйӑхӗнче ӗҫлеме кӗнӗ. Уйӑх хушшинчех ӗҫлеме вӗренсе, вӑл халӗ кулленех икшер норма тултарса пырать. Икӗ уйӑх каялла ӗҫе пырса кӗнӗ килхуҫи хӗрарӑмӗсем Н. Маликовӑпа Е. Корнеева юлташсем те юлашки вӑхӑтра пӗр браксӑр ӗҫлеҫҫӗ. Халӗ вӗсем те двухсотниксен ретне тӑчӗҫ.

Х. ЛИСИН.

Комсомолец ертсе пыракан колхозра

ИШЛЕЙ. Комсомолец М. Тимофеев юлташ колхоз председателӗнче нумайрана ӗҫлемест пулин те, вӑл ӗҫлеме пуҫланӑранпа колхоз чылай малалла кайрӗ. Уйрӑмах колхозниксен ӗҫ дисциплинин ҫирӗпленнине палӑртмалла.

Халӗ колхоз хӗрсех ҫуракине хатӗрленет. Паянхи куна 15 плуг, 20 сӳре юсанӑ. Шкул ачисен вӑйӗпе 20 центнер кӗл, 9 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ. Ку ӗҫре уйрӑмах Т. Трофимов, В. Константинов, П. Федоров пионерсем хастарлӑн хутшӑнса ӗҫленӗ. Колхоз минераллӑ удобренисем те хатӗрлет. Ҫак кунсенче Вӑрнартан 50 центнер ытла фосфорит ҫӑнӑхӗ турсе килнӗ. 100 гектар ҫинче юр тытса хӑварнӑ. Уя 1.200 лав тислӗк кӑларнӑ. Лаша таврашӗсене те йӗркене кӗртнӗ.

Ҫуракине хатӗрленес ӗҫре колхоза шкул ачисем активлӑн пулӑшаҫҫӗ. Вӗсем уроксем хыҫҫӑн ялананах кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухнӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ, машина пайӗсемпе инструментсем пухаҫҫӗ.

Колхозри паллӑ колхозник 60 ҫулти Виктор Егоров колхоз ӗҫӗнче уйрӑмах активлӑн ӗҫлет, Хӗрлӗ Ҫара мӗн вӑй ҫитнӗ таран пулӑшса пырать. Вӑл государствӑна 50 пӑт ытла тырӑ типӗтсе панӑ. Унӑн виҫӗ ывӑлӗ отечественнӑй вӑрҫӑн фрончӗсенче тӑшмана хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫаҫҫӗ. Ку вара юратнӑ ватӑ ашшӗне колхозра татах та лайӑхрах ӗҫлеме хавхалантарать.

А. МИХАЙЛОВ.

Стена хаҫат редакторӗсемпе селькорсен канашлӑвӗ

СОВЕТСКОЕ. Стена хаҫат редакторӗсемпе селькорсен февралӗн вӗҫӗнче пулса иртнӗ канашлӑвӗ ҫуракине хатӗрленесси ҫинчен сӳтсе яврӗ. Канашлура ВКП(б) райкомӗн секретарӗ П. Никитин юлташ доклад туса пачӗ.

Кӑҫалхи ҫураки, иртнӗ ҫулхи ҫуракипе танлаштарсан, чылай уйӑрӑлса тӑрать. Стена хаҫачӗсем умне те пысӑк задачӑсем тухса тӑраҫҫӗ. Вӗсен колхозсене ҫуракине хатӗрленсе ҫитме пулӑшмалла. Нумайӗш колхозсенчи стена хаҫачӗсем отечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пичет мӗнле вырӑн йышӑнса тӑнине тӗплӗн ӑнланса илнӗ. «Сатурн» колхозра стена хаҫачӗ йӗркеллӗ тата вӑхӑтра тухса тӑрать, иртнӗ ҫулта пурӗ 26 номер кӑларнӑ. «Броневик» колхозра иртнӗ ҫулта 36 номер кӑларнӑ. Стена хаҫатне кӑларас ӗҫе унӑн редакторӗ Д. Михайлов юлташ кӑҫал та лайӑх йӗркелесе пырать. Кунти стена хаҫачӗсен страницисем ҫинче ҫуракине хатӗрленес, фронта пулӑшса пырас ыйтусене анлӑн ҫутатса пыраҫҫӗ. Кунпа пӗрлех ӗҫри ҫитменлӗхсем ҫинчен ҫырма та манмаҫҫӗ. «Хӗрлӗ Ҫар» колхозра та Исаева юлташ стена хаҫачӗпе интересленсе, ӑна йӗркеллӗ кӑларса тӑрать.

Канашлура тухса калаҫнӑ юлташсем ҫитменлӗхсене палӑртса, малалла ӗҫлеме паха кӑтартусем пачӗҫ.

Стена хаҫат редакторӗсен хӑйсен умӗнче тӑракан задачӑсене пӗр минутлӑха та манмалла мар. Стена хаҫачӗсене вӑхӑтра кӑларса, массӑсене хавхалантарса пымалла.

М. СТЕПАНОВА.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налога тӳлесе татнӑ

ИШЛЕЙ. Ишек ялсоветӗнчи ӗҫҫыннисем хушшинче массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне лайӑх йӗркеленине пула колхозниксемпе «Большевик» промартель членӗсем Хӗрлӗ Ҫара ытларах та ытларах пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗсем фронта татах та вӑйлӑн пулӑшас тесе вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налога вӑхӑтченех тӳлеме пуҫларӗҫ. Налог агенчӗ М. Мудыков юлташ хӑй те тимлӗн ӗҫлет. Вӑл вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налога 21.000 тенкӗ пухса панӑ.

И. МАРКОВ.

Хӗрлӗ Ҫар вӑй-хӑватне ҫирӗплетме

СЕНТЕР. Оринино ялсоветӗнчи «Красное Сормово» колхозри колхозниксем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи налог ҫинчен ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн налог укҫине тӳлеме пуҫларӗҫ. Чи малтан сурӑх ферминче ӗҫлекен колхозница Акрамовская юлташ 150 тенкӗ тӳлерӗ. Ун хыҫҫӑн П. Николаев 240 тенкӗ, Д. Смирнов 180 тенкӗ тӳлерӗҫ.

И. ИВАНОВ.

Ҫӗнӗ кӗнекесем

Чӑвашсен Государство Издательствинче ҫак кунсенче ҫакӑн пек кӗнекесем пичетрен тухрӗҫ:

АНАТОЛЬ ФРАНС. — КРЭНКБИЛЬ. Кӗнекере 60 стр., тиражӗ 2500 экз., хакӗ 75 пус. Шупашкар. Чӑвашгосиздат.

Анатоль Франс — французсен паллӑ писателӗсенчен пӗри. Вӑл ҫырма часах тытӑнман пулин те, хӑйӗн вӑрӑм ӗмӗрӗнче пайтах калавсемпе повеҫсем, романсем ҫырнӑ. Анатоль Франс хӑйӗн ҫивчӗ сӑмахӗсемпе пӗрре кӑна мар капитализм обществинчи тӗрӗсмарлӑхсене хирӗҫ тухнӑ, вӑл буржуалла обществӑн политикипе тӗнне тата унӑн моральне хытӑ критикленӗ, хӑй социализмшӑн кӗрешекенсем енче тӑракан ҫын пулнине уҫҫӑнах кӑтартса пама та хӑюлӑх ҫитернӗ. Октябрь революцийӗ пуличчен ҫирӗм ҫул малтан А. Франс ҫирӗппӗнех татса: «Социализмлӑ Европа пулмалла», тесе каланӑ. Ҫакӑн пек пророкла каланӑ хӑйӗн сӑмахӗ пурнӑҫа кӗме пуҫланине А. Франс хӑех курнӑ, вӑл Российӑра социализмлӑ революци пулнӑ хыҫҫӑн, 1922-мӗш ҫулта вилнӗ.

«Крэнкбиль» калаври геройӑн сӑмахӗсемпе А. Франс этем пултарулӑхне аталанма чарса тӑракан, ӗҫҫыннисен массисене чуралӑхра усракан буржуалла обществӑна хирӗҫ тӑрать.

Асӑннӑ произведени—А. Франсӑн чӑвашла пуҫласа кӑларнӑ произведенийӗ.

Шемекке сучӗ (вырӑс халӑхӗн халлапӗсем). Чӑвашгосиздат, 1942 ҫул, 16 стр., хакӗ 50 пус.

Ҫак кӗнекене вырӑс халӑхӗн паллӑ халлапӗсене кӗртнӗ. Кӗнекере пурӗ тӑватӑ халлап. Вӗсенче ҫӑткӑн судьяпа пупсене вырӑс мужикӗсем епле ултала ни ҫинчен кӑтартса панӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ НА ПОСТОЯННУЮ РАБОТУ:

плотники, столяры, кузнецы, слесари, каменщики и подсобные рабочие, мужчины и женщины.

Имеется столовая, жильем обеспечиваются.

С предложением обращаться по адресу: пос. Сосновка, г. Чебоксары, отдел кадров. 3—2

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн—4—26, пропагандӑпа парти пурнӑҫ пайӗн — 5—31, ялхуҫалӑх пайӗн — 3—99, «Ленин ҫулӗпе» журналӑн тата комсомол пурнӑҫ пайӗн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 664

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п. л.